Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

54 (8015) № ✻ Юн кун, 2012 çулхи утă (июль) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Симĕс ĕç çи – 2012

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ УТĂ УЙĂХĔН 17-МĔШĔ ТĔЛНЕ ВЫЛЬĂХ АПАЧĔ ХАТĔРЛЕССИПЕ ЕПЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТНИ**

*(тоннăпа)*

**Колонкăсенче: 1. Утă хатĕрленĕ. 2. Сенаж хывса хăварнă.**

| | | |
|---|---|---|
| Е.Андреев яч. хис. | 470 | – |
| "Восток" | 65 | 750 |
| "Герой" | 270 | 950 |
| Ильич яч. хис. | 280 | 1250 |
| "Путь Ильича" | 342 | 1330 |
| "Оринино" | 180 | – |
| "Передовик" | 200 | – |
| "Свобода" | 920 | 190 |
| Суворов яч. хис. | 656 | 200 |
| "Ударник" | 750 | 1700 |
| Чапаев яч.хис. | 150 | 750 |
| Чкалов яч.хис. | 410 | – |
| АПФ "Колос" | 25 | – |
| **Районĕпе** | **4718** | **7120** |

Пирĕн истори

## Чăвашри чи пысăк юман

Ильинкăри лесничество участокĕнче ÿсекен юман – çут çанталăкăн чăн-чăн тĕлĕнтермĕшĕ. Вăл чăваш тăрăхĕнче чи пысăкки шутланать. Йывăç вуллин диаметрĕ 182 сантиметр чухлĕ. Унăн çÿллĕшĕ вара аслати сиенлетиччен 26 метр пулнă, халĕ 20 метр. Миçе çулта-ши ку палăк? 480 çул тултарнă иккен тĕлĕнтермĕш юман.

Ильинкăри лесничество участокĕнчи юман республика шайĕнчи палăк пулнине 1981 çулта çирĕплетнĕ. Йывăç ача-пăча лагерĕн территорийĕнче ÿсет.

Экологипе çут çанталăк ресурсĕсен министерстви çак юмана "Йывăççем – çут çанталăкăн чĕрĕ палăкĕсем" Пĕтĕм Раççейри программăпа килĕшÿллĕн çут çанталăкăн чĕрĕ палăкĕ шутне кĕртме ыйтнă. Ку тĕлĕшпе тимлекен пысăк опытлă специалистсем тĕпчев ĕçĕсем ирттернĕ, йывăça тивĕçлĕ хак панă, унăн çулне палăртнă. Çапла вара сертификаци комиссийĕ юмана Раççейри чи пысăк ÿсĕмри йывăççен реестрне кĕртме йышăннă. Çавна май истори палăкĕ тĕлĕшпе хăшпĕр ĕç пурнăçлама палăртнă, вăл шутра упрасси-сыхласси те. Палăртса хăвармалла, юман çирĕп ÿсни-аталаннинче Раççей вăрманçин Бронислав Гузовскин тÿпи те сахал мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Ĕçпе тивĕçтерекен центрта

## Профессие тĕллевлĕ суйлама

Профессие тĕллевлĕ суйлама вĕрентесси – паянхи кун ыйтакан утăм. Мĕншĕн тесен хальхи вăхăтра ĕç тупас ыйту тĕрлĕ ÿсĕмри çынсене пырса тивет. Анчах та çамрăксен умне ку тĕлĕшпе пăтăрмах ытларах тухса тăрать. Çакна шута илсе районти ĕçпе тивĕçтерекен центр профориентаци ыйтăвĕ çине пысăк тимлĕх уйăрать.

Çулталăк пуçланнăранпа профориентаци услугипе 492 çынна тивĕçтернĕ. Вĕсенчен ытларахăшĕ – 14–29 çулхи çамрăксем (430 çын). Çул çитмен граждансене професси тĕнчипе тĕплĕнрех паллаштарас тĕллевпе ĕçпе тивĕçтерекен центр тĕрлĕ майсемпе усă курса ĕçлет. Вĕсен шутĕнче «Манăн пулас професси», волонтерсене явăçтарнă «Эпĕ рабочи пулăттăм» уйăхлăхсемпе пĕрлех ытти акцисемпе тренингсем те ирттернĕ.

**Хамăр инф.**

Районăн маттур çыннисем



*Эсир сăн ÿкерчĕкре куракан Зоя Николаевна Васильева "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕнче машинăн ĕне сăвакан операторта вăй хурать. Нумаях пулмасть вăл хăйĕн хастар ĕçĕшĕн Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçрĕ.*

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ÿкерчĕкĕ.**

## Вĕренÿ условийĕсем пĕр пек пулмалла

***Шкулсенче вĕрентÿ системине модернизацилессин программипе килĕшÿллĕн юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Юсав ĕçĕсем ирттерес енĕпе урăх енлĕ пулăшу пур-и? Çак ыйту çине хуравлама район администрацийĕн вĕрентÿ тата çамрăксен политикин пайĕн пуçлăхне З. ДИПЛОМАТОВĂНА ыйтрăмăр.***

– Чăваш Республики «Доступная среда» федераллă программăна пурнăçлассинче те хутшăнать. Пирĕн района ку программăпа килĕшÿллĕн 2 миллион ытла тенкĕ уйăрса панă: федераллă тата республика бюджечĕсенчен 50-шар процент.

Чăваш Республикин Вĕрентÿ тата çамрăксен политикин министерствин хушăвĕпе сывлăх тĕлĕшпе сахалтарах майсемлĕ ачасем çÿремелли база шкулне палăртнă. Пирĕн тĕслĕхре вăл – Муркашри вăтам шкул.

Çак программăпа килĕшÿллĕн шкулта 1 миллион та 375 пин тенкĕлĕх капиталлă юсав ĕçĕсем ирттермелле. Мĕнле ĕçсем пурнăçламалла-ха? Пандус тумалла, коляскăпа çÿрекенсем валли туалетсем тумалла, алăксене коляскăпа ирĕклĕн кĕрсе тухма сарлакалатмалла, гигиена пÿлĕмĕсем йĕркелемелле тата оборудовани упрамалли пÿлĕмсем те пулмалла.

Федераллă бюджетран уйăрнă 1 миллион та 375 пин тенкине спецификăллă оборудовани туянма ямалла. Çак ĕçе аукцион урлă пурнăçламалла.

Паянхи кун тĕлне районта 120 инвалид ача. Шкула çÿрекенсен ÿсĕмĕнче хăлха илтменнипе виçĕ ача, калаçу йĕркеллĕ маррисем икĕ ача, ăс-тăн аталанăвĕпе кая юлса пыракансем вун тăххăрăн, тĕревпе хускану аппаратĕ пăсăккисем вуннăн, ытти майсем хĕсĕкрех пулнисем те пĕр пилĕк ача. Маларах асăннă пулăшупа усă курса вĕсем валли ытти ачасемпе тан шкула çÿреме условисем туса парассипе ĕçлемелле.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Июлĕн 19-мĕшĕнче Ятман ялĕнче пурăнакан **Клавдия Афанасьевна ШАТУНОВА** 75 çул тултарать. Юратнă мăшăра, аннене, хунямана, асаннене юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу тата вăрăм кун-çул сунатпăр. Малашне те хăвăн ăшă кăмăлупа, ĕçченлĕхÿпе пире савăнтар. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр, пире пулăшса тăнăшăн тав тăватпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕ, 4 мăнукĕ.**

Катăкуй ялĕнче пурăнакан йăмăка, аппана – **Зоя Леонтьевна АНДРЕЕВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Ĕçрен те, çынна пулăшасран та пăрăнманскере тулли пурнăç, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Тăванусемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: пиччĕшĕпе инкĕшĕ, аппăшĕпе йыснăшĕ, йăмăкĕпе кĕрĕвĕ тата вĕсен ачисем.**

Оринин ял тăрăхĕнчи Чамăш ялĕнче пурăнакан йăмăка **Елена Игнатьевна ГРИГОРЬЕВĂНА**, йĕкĕрешсене – йăмăкпа шăллăма **Александр Игнатьевич ВЕРШКОВПА Раиса Игнатьевна КУРЧИНĂНА** çуралнă кунĕсем ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. **Светлана Васильевнăпа Александр Игнатьевич ВЕРШКОВСЕНЕ** кĕмĕл туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Халĕ саккăрăн пĕр тăвансем мĕнле юратса килĕштерсе пурăнатпăр, çак килĕшÿ мĕн уйрăлса кайиччен пытăрччĕ, пирĕн ачасем хушшинче те çыхăну нихăçан та ан татăлтăрччĕ. Хаклă тăвансем, сире пурсăра та ăнланупа килĕшÿлĕх, юратупа çураçулăх, çирĕп сывлăхпа вăрăм ĕмĕрлĕ кун-çул сунатпăр.

**Салампа: йĕкĕреш пиччĕшĕсен Иванпа Василий Вершковсен çемйисем, вĕсен хĕрĕсемпе ывăлĕсем, мăнукĕсем.**

Информаци кунĕ

## Ыйтусем – пĕлтерĕшлисем

Черетлĕ информаци кунĕ районта паян иртет. Унăн теми пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулсенче ĕçлекен çамрăк учительсене хăйсен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма патшалăх пулăшăвĕ парасси çинчен, Чăваш Республикин Пуçлăхĕн çемьере виççĕмĕш тата хыççăнхи ачасем çуралсан уйăхсерен укçан тÿлесе тăрасси пирки калакан указне пурнăçа кĕртесси, республикăри çулсем çинчи аварилĕ лару-тăрăвĕ çинчен тата Чăваш Республикинчи ĕç тăвакан влаç органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çул çинчи хăрушсăрлăха тивĕçтерессипе туса ирттерекен ĕçсем çинчен, ял хуçалăх производстви, вăл шутра килти хушма хуçалăха тытса пыракансене, республикăра сĕт туса илсе хатĕрлесе парассипе ĕçлекенсене патшалăх пулăшăвĕ парасси çинчен.

Района килекен информаци ушкăнĕсем Муркаш, Москакасси, Мăн Сĕнтĕр, Оринин ял тăрăхĕсенче пулса вĕсен территорийĕсенчи предприятисемпе организацисен ĕçĕ-хĕлĕпе паллашма, коллективсемпе тĕл пулма, çынсен ыйтăвĕсем çине хуравлама палăртаççĕ.

**Хамăр инф.**

Районта

## Шашкарти металлурги комплексне тĕпчеççĕ

Июлĕн 5-мĕшĕнче Ильинка ял тăрăхĕнчи Шашкар пристанĕ вырăнĕнче «Историпе художество музей комплексĕ» муниципаллă бюджет учрежденийĕн археологи экспедицийĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Д. Спрыжков ертсе пыракан экспедици ку тăрăхра пулнă металлурги комплексне тишкерет.

«Шашкар карти» ят панă сăмсаха Чăваш наци музейĕн экспедицийĕ 2007 çулта тупса палăртнă. Специалистсен каланă тăрăх, пăхăр ĕмĕрĕ вăхăтĕнче кунта 7 пин тăваткал метр лаптăк çинче хула пулма пултарнă-мĕн. 2008 çулта вара археологсем ĕç вăхăтĕнче металл шăратмалли кăмака тупнă – ĕç самаях анăланнă. Пурĕ çакнашкал 7 кăмака пулма пултарнă, теççĕ. Вĕсенчен пĕрне 2010 çулта, теприне пĕлтĕр, виççĕмĕшне кăçал тĕпчеççĕ. Археологсем Шашкар тăрăхĕнчи металлурги комплексĕ пек пысăк комплекс Атăлçи тăрăхĕнче ку таранччен урăх тупманнине палăртаççĕ.

Экспедици ушкăнĕ пирĕн районта июлĕн 31-мĕшĕччен ĕçлеме палăртать. Археологсен ĕçĕпе çак кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та паллашрĕ, тĕпчев ĕçĕнче ăнăçусем сунчĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

Хаксем

## Ăçта йÿнĕрех

***Районта вырнаçнă суту-илÿ точкисенче июлĕн 9-мĕшĕ тĕлне социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç таварĕсен хакĕсене танлаштарса кăтартни.***

**Колонкăсенче: 1.Социаллă пĕлтерĕшлĕ таварсем; 2. Муркаш РПО "Центральный"; 3. "Визит" ; 4. "Родничок"; 5. "Елена"; 6. Мăн Сĕнтĕр РПО "Гастроном".**

| | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|
| Чăх (тукмаксăр пуçне), кг | 100 | 105 | 103 | 105 | 103 |
| Шăнтнă пулă, кг | 45 | 79 | 60 | 60 | 74 |
| Услам çу, кг | 170 | 150 | 193 | 170 | 162 |
| Тип çу, кг | 43 | 43 | 47 | 46 | 47 |
| Сĕт, л | 30 | 31 | 32 | 33 | 27 |
| Çăмарта, шт. | 3 | 3 | 3 | 3 | 3 |
| Сахăр песукĕ, кг | 33 | 33 | 33 | 33 | 32 |
| Тăвар, кг | 8 | 7 | 10 | 11 | 6 |
| Хура чей, кг | 210 | 210 | 230 | 220 | 300 |
| Тулă çăнăхĕ, кг | 14 | 14 | 16 | 14 | 15 |
| Рис, кг | 24 | 26 | 25 | 30 | 26 |
| Вир, кг | 13 | 12 | 17 | 14 | 13 |
| Хура тулă, кг | 30 | 32 | 33 | 32 | 36 |
| Вермишель, кг | 20 | 18 | 20 | 19 | 18 |

Ылтăн туй



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене, аттепе аннене – Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи Опрыскъялĕнче пурăнакан **Фирсса Семеновнăпа Михаил Павлович ПАВЛОВСЕНЕ** 50 çул пĕрле пурăннă – ылтăн туй ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, телей, юрату, ăнăçу, вăрăм кун-çул сунатпăр. Турри сире вăй-хăват патăр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Эпир сире юрататпăр, сирĕнпе мухтанатпăр, эсир пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, 5 мăнукĕ, тăхлачи тата юратнă тăванĕсем.**

# «Амăш пуласси – питĕ пысăк телей»

«Мана пурнăç парнеле» акци



***Шупашкарти Трактор тăвакансен проспектĕнче хĕр арăмсен консультацийĕ вырнаçнă çурт патĕнче «Ача амăшĕ пулма хатĕрленекен чиперккесем» мода фестивалĕ иртрĕ. Унта Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев мăшăрĕпе пулчĕ. Малтанах Михаил Игнатьев Лариса Юрьевнăпа çуралнă ачасен реанимаци тата интенсивлă терапи уйрăмĕн ĕçĕ-хĕлĕпе, унти условисемпе паллашнă, кайран вара савăнăçлă фестивале хутшăннă.***

***Каласа хăвармалла, çак фестиваль республикăра иртекен «Мана пурнăç парнеле» абортсене хирĕç йĕркеленĕ акци (июлĕн 9–15-мĕшĕсенче) программипе килĕшӳллĕн иртнĕ.***

***Ачасем ытларах çуратчăр тесе ача амăшĕсене, нумай ачаллă çемьесене халĕ патшалăх тĕрлĕ çăмăллăх парса пулăшать. Анчах та аборт тăвакан хĕрарăмсем нумай. Аборт тăвакан хĕрарăм çак утăма мĕнле шухăш-кăмăлпа тума шутлать-ши? Ку ыйту çине хурав тупас тесе паянхи калаçăва «Хулари тĕп больница» бюджет учрежденийĕн хĕрарăмсен консультацийĕн уйрăмĕн заведующине М. Куприна акушер-гинеколог врача чĕнтĕмĕр.***

**– Марина Петровна, ыйту чăнах та çивĕч-и?**

– Шел пулин те, çие юлнине операци туса чарассипе, çынсем хăнăхнă пек каласан, аборт тăвассипе, Раççей малти вырăнта. Çулталăкра пирĕн çĕр-шывра 1,3 миллион аборт тăваççĕ. 40 çула çитмен хĕрарăмсен 2 процентĕ кăна çав таранччен пĕрре те аборт туман. Статистика тăрăх çие юлнă 100 тĕслĕхрен 54-шĕ аборт тăвассипе вĕçленет, 44-шĕнче – ача çуралассипе, 2-шĕ – матка тулашĕнче çие юлнипе.

**– Аборт тăвакан хĕрарăм çак утăма мĕнле шухăш-кăмăлпа тума шутлать-ши?**

– Аборт тунин сиенĕ пирки нумай калаçатпăр. Кашни хĕрарăмах аборт тумалла ан пултăр тесен мĕнле сыхланмаллине пĕлет. Апла пулин те официаллă абортсен шучĕ чакмасть-ха. Çавăнпа та сирĕн ыйту çине пĕр шухăшлă хурав пама пулмасть. Сăлтавĕ тĕрлĕрен: çемьери материаллă тăнăçлăх, упăшка тата тăвансем енчен пулăшу мĕнле пулни, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем, ĕç вырăнĕпе çыхăннă ыйтусем. Анчах та чи пĕлтерĕшли – хĕрарăмăн кăмăл-сипечĕ, шухăшĕ, пурнăçри вырăнĕ мĕнле пулни.

**– Аборт туни организмра пĕр йĕр те хăвармасăр иртмест...**

– Çак операцие больницăри чи лайăх условисенче чи опытлă специалист тунă пулсан та сывлăхшăн витĕм пурах. Хĕрарăмăн организмĕ шок чăтса ирттерет. Унăн пур органĕ те ача ӳстерме хатĕрленнĕ-çке-ха. Нерв системи те, гормонсем те, иммун тытăмĕ те тĕрĕс ĕçлеймеççĕ. Хăш-пĕр хĕрарăмсен çак пулăм депрессие куçать.

Пĕтĕмĕшле илсен аборт хыççăнхи йывăрлăхсене икĕ пая уйăрма пулать: малтанхисем тата кая юлнисем. Малтанхисем патне ытларах чух пулма пултаракан юн кайнине, матка шыçнине тата ыттисене те кĕртеççĕ. Кайранхисем – урăх çие юлманни, шала кайнă шыçă чирĕсем, матка тулашĕнче çие юлни, менструаци циклĕ пăсăлни. Çавăнпа та аборт нихăçан та хăрушлăхсăр иртмест. Аборт хыççăн çие юлсан та хырăм ӳкес хăрушлăх пысăкланса пырать.

**– Апла пулсан сыхланмалла.**

– Халĕ сыхланмалли мелсем питĕ нумай. Организма юрăхлă контрацепци пирки врачпа канашлама вăтанмалла мар, ӳркенмелле мар. Хĕрарăмсене вара нихăçан та хăйсем тĕллĕн çие юлнинчен хăтăлмалла маррине асăрхаттарса хăварас килет. Амăш пуласси – питĕ пысăк телей. Çакна нихăçан та ан манăр.

**Н. НИКОЛАЕВА хатĕрленĕ.**

Райадминистрацире

# Хисеп грамотипе наградăланă

***Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн 2012 çулхи июнĕн 6-мĕшĕнчи 484 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Галина Юрьевна АЛЕКСЕЕВĂНА**, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн сысна пăхаканне;

– **Надежда Анатольевна ГАВРИЛОВĂНА**, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн уй-хир бригадин ĕçченне;

– **Николай Николаевич ИВАШКИНА**, Суворов ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн механизаторне.

***Ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунăшăн тата обществăлла ĕçсене активлă хутшăннăшăн район администрацийĕн 2012 çулхи июлĕн 3-мĕшĕнчи 579 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– **Николай Иванович АЛЕКСАНДРОВА**, «Ударник» хуçалăхăн машинăпа ĕне сăвакан операторне;

– **Татьяна Александровна МИКРЯКОВĂНА**, районти тĕп больницăн хирурги уйрăмĕн медицина сестрине;

– **Оксана Юрьевна НАЛИМОВĂНА**, «Оринино» ял хуçалăх производство кооперативĕн тĕп бухгалтерне;

– **Оксана Георгиевна ФЕДОТОВĂНА**, Чуманкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулăн вырăс чĕлхипе литературин учительне.

***Район администрацийĕн 2012 çулхи июлĕн 5-мĕшĕнчи 587 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă:***

– потребительсен кооперацийĕнче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн – **Людмила Витальевна ЗВОНКОВĂНА**, «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн çăкăр пĕçерекен технологне;

оперативлă служба ĕçĕ-хĕлĕнче тунă çитĕнӳсемшĕн:

– **Михаил Мефодьевич МЯСНИКОВА**, РФ Шалти ĕçсен министерствин Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи пайĕн полици подполковникне;

– **Вениамин Михайлович МАКСИМОВА**, РФ Шалти ĕçсен министерствин Чăваш Республикинчи Муркаш районĕнчи пайĕн полицин шалти службин подполковникне.

Интервью

# Ача-пăча шăпи суд приставĕсене те кăсăклантарать

***Суд приставĕсен федераллă службин Чăваш Республики тăрăх управленийĕн ертӳçĕн çумĕпе Евгений Дмитриевич МАКАРОВПА иртнерĕ интервью.***

**– Раççей Федерацийĕн Уголовлă кодексри 157 статьяна кĕртнĕ улшăнусем кăçалтанпа вăйра. Алимент тӳлессинчен сĕмсĕррĕн пăрăнакансене пырса тивекен статьяпа, тархасшăн, пирĕн вулакансене паллаштарсамăрччĕ.**

– Çак çулталăкранпа пирĕн службăн полномочийĕсем анлăланчĕç. Апла – суд приставĕсен федераллă службин ведомство пăхăнăвĕнчи преступленисемшĕн явап тытасси те çирĕпленчĕ. Эпĕ калани патне шăпах Уголовлă кодексри 157 статьяри 1 тата 2 пайĕсемпе пăхса хунă яваплăх та кĕрет. 2012 çулчченхи январĕн 1-мĕшĕччен явап тытасси шутĕнче ирĕкрен хăтарасси пулман. Паянхи куна алимент тӳлессинчен сĕмсĕррĕн пăрăнакансене ирĕкрен хăтарнă тĕслĕхсем те пур. Çакăн пек наказание пурнăçлакансенчен пĕрремĕшĕ, тĕлĕнмелле пулсан та, арçын мар, хĕрарăм пулчĕ. Хăйĕн çул çитмен икĕ ачине пăхса усрама алимент тӳленмешĕн ăна 8 уйăхлăх ирĕкрен хăтарнă.

**– Апла арçын алимент тӳлессинчен пăрăнни – хăнăхнă пулăм. Кун пек хĕрарăмсем нумай-и вара?**

– Нумайăшĕ арçынсем, хĕрарăмсем – 10 процента яхăн.

**– Çирĕп наказанирен камсен халех хăраса тăмалла-ха?**

– Суд приставĕсемпе официаллă калаçу пулнă хыççăн та, асăрхаттарнă хыççăн та алимент тӳлессинчен сĕмсĕррĕн пăрăнакансен. Сывлăх тĕлĕшпе ĕçлеме пултараççĕ, ĕç рынокĕнче кирлĕ специальноçлă пулсан, анчах та темĕнле сăлтавсене пула пачах та алимент тӳлеме килĕшмеççĕ пулсан та çак наказани кĕтет.

**– Эсир вĕсене тăтăшах тĕрĕслесе тăратăр апла?**

– Паллах. Раççей Федерацийĕн Уголовлă процесс кодексĕпе килĕшӳллĕн ятарлă тĕрĕслевсем ирттернĕ тăрăх эпир уголовлă ĕç пуçарасси пирки е ăна пуçарассине пăрахăçлама йышăнусем тăватпăр. Ку тĕрĕслев тапхăрĕпе çыхăннă.

**– Çын пурнăçри хăш-пĕр сăлтавсене пула алимент тӳлемест пулсан? Эсир çакна шута илетĕр-и? Е парăмçăн темĕнле пулсан та парăма татмалла тени малта тăрать?**

– Паллах, тĕрлĕ лару-тăрăва шута илетпĕр. Сывлăхпа ĕç пирки маларах каларăмăр. Алимент тӳлекенĕн çĕнĕ çемье, ачасем пулма пултарнине те шута илетпĕр.

**– Сирĕн ĕç пурлăх туртса илессипе, конфискацилессипе çыхăннă. Алиментçăсем тĕлĕшпе çапла часчасах пулса иртет-и?**

– Суд йышăнăвĕсене пурнăçлас ĕçсене татса панă чухне эпир кирек хăш парăмçăн, вăл шутра алимент тӳлемелли çыннăнне те, материаллă тăнăçлăхне тĕрĕслетпĕр. Кредит учрежденийĕсенче, ытти учрежденисемпе предприятисенче мĕнле те пулин тупăш е укçа хывни çук пулсан парăмçăн пурлăхне арестлетпĕр. Кайран вара кирлĕ пулсан çак пурлăха суту-илӳ организацийĕсем урлă (вĕсем пирĕн ултă) сутатпăр. Çапла майпа илнĕ тупăша алимент шыраса илекенĕн счечĕ çине куçаратпăр.

**– Пурлăха каялла тавăрса пани пулать-и?**

– Кун пек тĕслĕхсем те чылай. Акă нумаях та пулмасть алимент тӳлемелли çыннăн пысăк сумма – 800 пин тенкĕне яхăн – пухăннăччĕ. Парăмçăн ĕç укçи пысăк пулнипе парăм та пысăк пуçтарăнса пынă. Парăмçăн çăмăл машинине шырава пĕлтернĕ, ăна тытса чарнă, арестленĕ автотранспорта усрамалли ятарлă площадкăна вырнаçтарнă. Саккунпа пăхса хунă 10 талăк хушшинче парăмçă хăйĕн парăмне тĕппипех тӳлесе татрĕ, суд йышăнăвĕсене пурнăçлас ĕçсене тунăшăн та 50 пин тенкĕ тӳлерĕ.

Каласа хăвармалла, алиментсем шыраса илессинче тĕрлĕ мероприятисем ирттеретпĕр. Вĕсенчен пĕри – «Ашшĕ-амăшĕн тивĕçĕ» ятарлă акци. Ăна ирттернипе акă пурĕ 1 миллион тенкĕ ытла шыраса илме пултартăмăр.

Суд ĕçĕнчи çĕнĕлĕхсем

# Суд пĕлтерĕвĕ – смс урлă тата электронлă почтăпа



Хăш-пĕр суд ларăвĕсенче, сăмахран, явапçă ăна кирлĕ пек йĕркепе пĕлтернĕ пулсан та, суда пыман тĕслĕхсем пулаççĕ. Çавăнпа та паян суд процесне хутшăнакансене унта пымаллине пĕлтерессин йĕркипе паллаштаратпăр.

Раççей Федерацийĕн Конституцийĕн 46 статйипе килĕшӳллĕн кашнинех хăйĕн прависемпе ирĕкĕсене судпа хӳтĕлеме юрать. РФ Гражданла процесс кодексĕн 3 статйи вара суда ыйтнипе тухма ирĕк парать.

РФ Гражданла кодексăн 12 статийнче гражданла правăсене мĕнле майсемпе хӳтĕлеме ирĕк пуррине çырса кăтартнă. Вĕсем тĕрлĕрен: правăна йышăнни; правăна пăсicченхи положение тавăрни тата правăна пăсакан е пăсма пултаракан хăрушлăха пӳлни; патшалăх органĕн е вырăнти хăй тытăмлăх органĕн саккуна хирĕçлекен актне чăн тесе йышăнманни; кăмăл-сипет енчен сиен кӳнине компенсацилени тата саккунпа килĕшсе тăракан ытти чылай майсем.

Граждансем судра хăйсен ĕçĕсене харпăр хăйсем е представитель урлă тума пултараççĕ. Гражданин суда хăй хутшăнни ăна çак ĕçпе представитель тытма чарассинчен хăтармасть.

РФ Гражданла процесс кодексĕн 113 статйипе çынна суда мĕнле чĕнмелли йĕркене палăртнă. Çапла вара суд ĕçне хутшăнакансене заказ çырăвĕпе тата ăна илнине хыпарланипе, суд повесткипе тата ăна илнине хыпарланипе, телефонограммăпа е телеграммăпа, факсимильлĕ çыхăнупа е суд чĕнĕвне палăртса пыракан хыпар çитермелли ытти тĕрлĕ çыхăну урлă пĕлтерме пулать. Суд ĕçне хутшăнакан çынсене, вĕсен суда хатĕрленме тата унта çитме кирлĕ чухлĕ вăхăт пултăр тесе, суд пĕлтерĕвĕпе суд чĕнĕвне маларах çитермелле.

РФ гражданла процесс саккунĕсемпе çирĕплетнипе суд процесне хутшăнакансене кирлĕ пек пĕлтернин тĕп палли – суд пĕлтерĕвне е чĕнĕвне адресата панине обязательнăй йĕркепе палăртса пыни. РФ Аслă Сучĕн Пленумĕ кăçалхи февралĕн 9-мĕшĕнчи 3 № «РФ Аслă Сучĕн Пленумĕн хăш-пĕр постановленийĕсене улшăнусем кĕртесси çинчен» постановленийĕпе хăйĕн хăш-пĕр постановленийĕсене улшăнусем кĕртрĕ. Вĕсем пĕтĕмĕшле юрисдикциллĕ судсенче çыхăну смс çыхăну суд пĕлтерĕвне е чĕнĕвне адресат патне çитерессипе çыхăннă. Çапла вара çĕнĕ постановлени судсен ĕçне пĕрлĕх кĕртет: суд ĕçне хутшăнакансене, вĕсем хăйсене çапла пĕлтерме килĕшеççĕ пулсан тата смс янипе çитнине палăртсан, смс хыпарпа пĕлтерме юрать. Çын суд пĕлтерĕвне смс хыпарпа илме килĕшнине расписккăпа çирĕплетет. Распискăра суд ĕçне хутшăнаканăн даннăйĕсемпе пĕрлех вăл çапла май суд пĕлтерĕвне йышăнма хăйĕн кĕсье телефонĕн номерне те кăтартать.

Хальхи вăхăтра Чăваш Республикин Муркаш район сучĕ суд ларăвĕсене хутшăнакансене суд пĕлтерĕвне çак çĕнĕ йышши майпа – кĕсье телефонĕн номерĕ çине смс хыпар ярса чĕнессипе – анлă усă курать. Çакна валли компьютерта ятарлă «WEB-SMS» программа вырнаçтарнă. Пулмалли суд ларăвĕсем пирки суд пĕлтерĕвне смс хыпарпа е электронлă почтăпа илме килĕшни пирки суда хутшăнакан çырса çирĕплетет. Килĕшĕве (е килĕшменнине), кĕсье телефонĕн номерне иск заявленийĕ, апелляци çăхавне панă чухне, е суд ларăвне пĕрремĕш хут пынă чухне (явапçă валли) ыйтса пĕлеççĕ.

Пĕлтерĕве çапла майпа çитересси саккуна хирĕçлемест, суд пĕлтерĕвне хутшăнакансем патне çитермелли хăвăрт мел шутланать. Суд пĕлтерĕвĕсене смс хыпарпа е электронлă почтăпа адресат патне ярассинче кирлĕ чăн информацие çитернин пур енĕ те пур. Çапла майпа суд процеса хутшăнакансене суд ларăвĕн вăхăчĕпе вырăнĕ пирки е уйрăм процесс ĕçне пурнăçласси пирки пĕлтерме пултарать.

Официаллă сайтпа электронлă почта адресĕ пур патшалăх учрежденийĕсем тĕлĕшпе суд пĕлтерĕвĕсене, докуменчĕсене, официаллă майпа алă пусни тата пичет лартни кирлĕ мар пулсан (хальлĕхе судсенче электронлă алă пусни çук), почтăна вулани пирки пĕлмелли паллă лартса электронлă майпа çитерме юрать. Сăмахран, ĕçе тишкерме хатĕрленес тапхăрта çырусене, ыйтнисене (запросы) яма юрать.

РФ Гражданла процесс кодексĕн 113 статйинче палăртнă суд пĕлтерĕвĕсен формисен саккунпа ыйтнине пĕр пек тивĕçтермелле: суд пĕлтерĕвне е чĕнĕвне адресат патне çитернине палăртмалла.

Смс пĕлтерӳ форми суд ĕçне хутшăнакан кашни çыншăнах йăлана кĕнĕ почта повесткинчен меллĕрех. Уйрăмах пĕрмай çул çӳревсенче пулакансемшĕн, тăтăш почта ещĕкне тĕрĕслеме е почта уйрăмне пыма май çук пулсан. «Мобильлĕ пĕлтерӳсем» суд ĕçне пăхса тухас тапхăра та кĕскетме май параççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем темиçе çеккунтрах адресат патне çитеççĕ, почта повесткисем вара – темиçе кун.

**Э. ТАРАСОВА,**
**Чăваш Республикин Муркаш район сучĕн председателĕ.**

# Питрав пуххине хутшăнчĕç

**Культура**




Катькасри Культура çурчĕ çумĕнчи «Çăлкуç» фольклор ушкăнĕ **(сăн ӳкерчĕкре)** Чул хула облаçĕнче çулсеренех пулакан Питрав пуххинчен таврăнчĕ. Фестиваль-уяв кăçал Воротынец поселокĕнче иртнĕ.

Пухă чăваш халăх юрри-ташшипе, вăййисемпе, ăмăртăвĕсемпе йăла-йĕркесене кăтартнипе пуян пулнă. Чăваш апат-çимĕçне активсе пăхма та, халăх пултарулăх промыслисемпе паллашма та май пулнă унта.

Пирĕн «Çăлкуç» пухха пуçтараннă çынсене чăваш халăх юрри-ташшипе савăнтарнă, кӳршĕсем патне техĕмлĕ апат-çимĕç те пĕçерсе кайнă. Н. Кондукторова пултарулăх ертӳçине тата фольклор ушкăнне Тав çырăвĕсем парса хавхалантарнă. Питрав пуххине Е. Ерагин тавра пĕлӳçĕ те хутшăннă.

Фольклор ушкăнĕ Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутатне Н. Ванеркина тата ветерансемпе инвалидсен Шупашкар районĕнче вырнаçнă «ВЕГА» реабилитаци центрне тав сăмахĕ калать.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Муркашри çамрăк техниксем малта

**Хушма пĕлӳ паракан учреждениисенче**



Кашни вĕренӳ çулĕнчех шкул ачисен Чăваш Республикинчи спортпа техника тата çарпа спорт енĕсемпе спартакиади иртет. А. Николаев летчик-космонавт ячĕллĕ кубока çĕнсе илессишĕн республикăри хуласемпе районсенчи çамрăк техниксем тĕрлĕ енлĕ ăмăртаççĕ.

Акă иртнĕ кунсенче 2011–2012 вĕренӳ çулĕн пĕтĕмлетĕвĕ паллă пулчĕ. Пирĕн районти «Çамрăк техниксен станцийĕ» хушма пĕлӳ паракан вĕрентӳ учрежденийĕ çак вĕренӳ çулĕнче те спартакиадăна ăнăçусемпе вĕçлерĕ.

Вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех тĕрлĕ ăмăртусем пулчĕç. «Сывлăш çĕленĕсем», «Корд моделĕсем» авиамоделĕсен ăмăртăвĕсенче, пăшалтан тĕл пересиснче Муркашсем 2-мĕш вырăнсене тивĕçрĕç. Çамрăк пушарнăйсен, судомодельсен спорт ăмăртăвĕсенче тăваттăмĕш вырăнсем йышăнма пултарчĕç. Хупă пӳлĕмсем валли хатĕрленĕ авиаци моделĕсен республика ăмăртăвĕнче, ракета моделĕсен ăмăртăвĕнче вара çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç.

Спартакиада пĕтĕмлетĕвĕ, паллах, пирĕн çамрăк техниксене савăнтарчĕ: республикăра 1-мĕш вырăн.

**Н. ФИЛИППОВА,**
**методист.**

**Сăн ӳкерчĕкре: картингистсен ăмăртăвĕнче.**

**Ыйту – хурав**

## Шывшăн тӳлетпĕр е...?

**«Малтан эпир шывпа усă курнăшăн Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăха укçа тӳлесе тăнă. Халĕ шывшăн тӳлемелли квитанцие пире ял тăрăхĕнчен салатса параççĕ. Пĕр çын пуçне 50 тенкĕ чухлĕ ларать. Шыв счетчикĕ пуррине те пăхмаççĕ. Шывшăн кăна мар, электроэнергишĕн те тӳлетĕр тесе ăнлантараççĕ. Прописккăра 4–5 çын пулсан, шутласа пăхăр-ха, пĕр уйăхра миçе тенкĕ тӳлетпĕр. Çапла укçа пуçтарни тĕрĕс ши?»**

***Çапла пăшăрханса шăнкăравларĕ редакцие Катькас ял тăрăхĕнчи пĕр хĕрарăм. Ыйтăва вырăнти шайра татса памаллине шута илсе Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕпе Г. Лебедевпа курса калаçрăмăр. Унăн хуравĕнчен акă мĕн палăрчĕ.***

– Чăн та кашни çын пуçне 50 тенкĕ тӳлеме депутатсен ял тăрăхĕнчи Пухăвĕнче çирĕплетнĕ. Мĕншĕн тесен шыв башни ĕçлени электроэнергипе те çыхăннă. Çапла вара малтан Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх çинче пулнă шыв башнине ĕçлеттернĕ электроэнергишĕн тӳлетпĕр тени тĕрĕсех. Килте мĕн чухлă çын прописккăра тăни пĕтĕмĕшле сумма çине витĕм кӳрет паллах.

Ял халăхĕ пĕрле пухăнса кăна (сход граждан) çак ыйтупа ял тăрăхне сĕнӳ тăратма пултарать.

Москакасси ял тăрăхĕ.

**Спорт**

## Республикăра мала тухнă

Иртнĕ шăмат кун, июлĕн 14-мĕшĕнче, Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 2 № специализациленнĕ спорт шкулĕнче çуллахи биатлон енĕпе республика ăмăртăвĕ иртнĕ.

Пирĕн районти «Ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК» хушма пĕлӳ паракан учреждени тренерĕн Э. Гордеевăн (Ярапайкассинчи уйрăм) воспитанникĕсем унта ăнăçлă ăмăртнă. Спринт чупăвĕнче Диана Чернова 1-мĕш, Светлана Соколова 2-мĕш вырăнсем çĕнсе илнĕ. 1997–1998 çулсенче çуралнисен ӳсĕмĕнче ăмăртнă хĕрсем хальхи вăхăтра Олимп резервĕсен училищинче ăсталăха туптаççĕ.

**Хамăр инф.**

**Сыватнăшăн – тав**

Район больницинче вăй хуракан врачсене, медсестрасене, санитаркăсене, уйрăмах хирурги уйрăмĕнчи врач хирурга Г.М. Огурцова тав сăмахĕ калас килет. Палатăра выртакан пур чирлĕ çынна валли те вашаватлă та ыр кăмăллă пулнăшăн, унăн ылтăн аллишĕн тав сăмахĕ калатăп. Пурнăçра телейлĕ те çирĕп сывлăхлă пулăр, çӳлти Турри сире яланах пулăшса пытăр.

**КОЛЬЦОВА Л.**

**Прогноз погоды**

| | среда 18 июля | | | | четверг 19 июля | | | | пятница 20 июля | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | **+16** | **+16** | **+18** | **+15** | **+12** | **+20** | **+20** | **+16** | **+14** | **+20** | **+21** | **+19** |
| Давление мм | 735 | 734 | 738 | 740 | 742 | 742 | 742 | 742 | 742 | 741 | 740 | 739 |
| Влажность % | 97 | 100 | 73 | 68 | 83 | 67 | 58 | 74 | 85 | 69 | 70 | 71 |
| Ветер м/сек | 6 | 6 | 8 | 4 | 5 | 4 | 6 | 4 | 4 | 6 | 9 | 6 |
| | С-З | С-З | З | З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З |
| Солнце восход / заход | | 04:34 | 21:24 | | | 04:35 | 21:22 | | | 04:37 | 21:21 | |
| Луна восход / заход | | 03:52 | 20:27 | | | 05:02 | 20:53 | | | 06:16 | 21:15 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка**

**Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:070507:99, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение, земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:070507, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6345 кв.м.**

**Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.**

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

ОБУТКИ без накрутки

ярмарка экономная

более 100 видов обуви по 100 и 300 р

а также трикотаж, спецодежда, постельное белье

**20 июля с 9.00 до 18.00 в ДК с. Моргауши**
**с 10.00 до 17.00 в ДК с. Юнга**

**ИНФОРМАЦИОННОЕ СООБЩЕНИЕ**

На основании постановления администрации Моргаушского района Чувашской Республики N 608 от 12.07.2012 в соответствии со ст. 30, 38 Земельного кодекса Российской Федерации и Правилами организации и проведения торгов по продаже находящихся в государственной или муниципальной собственности земельных участков или права на заключение договоров аренды таких земельных участков, утвержденными постановлением Правительства Российской Федерации от 11 ноября 2002 г. N 808, администрация района извещает об отказе от проведения аукциона на право заключения договора аренды по Лоту № 3 - земельный участок с кадастровым номером 21:17:120302:76, категории «земли населенных пунктов», местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярабайкасинское сельское поселение, д. Сыбайкасы, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 2596 кв.м.

Обременения: земельный участок не обременен правами третьих лиц, не состоит в залоге, в споре и под арестом.

Ограничения использования земельного участка отсутствуют.

Начальная (стартовая аукционная) цена участка (размер годовой арендной платы) – 1650 (одна тысяча шестьсот пятьсот) рублей.

Сумма задатка – 20 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Шаг аукциона – 5 % от начальной (стартовой аукционной) цены участка.

Срок аренды – 5 лет.

**ООО «Виктория»**

* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков: оформление в собственность, в аренду, регистрация.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Составление договоров, исковых заявлений, жалоб, писем.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП.
* Ведение бухгалтерского учета, составление деклараций, передача их по Интернету.
* Кадровое делопроизводство.

Адрес: г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел. : 44-64-48, факс: 8 (8352) 22-10-60.
E-mail: vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru
Доп. офис: с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, офис 119. Тел.: 62-4-43.

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-20.**

**Продаю самодельный деревообрабатывающий станок, ширина лезвия 35 см, 4 тыс. об/м, трехфазный.**
**Тел.: 8-906-133-06-48.**

* * *

**Ноябрь уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура тĕслĕ ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-960-304-32-86.**

* * *

**Продаю корову. Тел.: 8-927-850-03-42.**

* * *

**Октябрь уйăхĕнче тăваттăмĕш пăруламалли хура-шурă ĕне сутатпăр. Тел.: 8-927-993-00-24.**

* * *

**Продаю песок речной, ОПГС с доставкой.**
**Тел.: 44-01-10. 8-10.**

* * *

**Продаю рожь. Тел.: 8-937-374-54-28.**

* * *

**Ĕнесем сутатăп. Виçшер хут пăруланисем. Пĕри хура-шурă, тепри хура тĕслĕ. Тел.: 8-900-333-67-27.**

* * *

**4 пачка хĕрлĕ керамблок (пĕри 5 тенкĕ) сутатăп. Адресĕ: Йӳçкасси ялĕ, Центральная урам, 50 çурт. Г.Г. Степанов. Тел.: 60-5-88. 1-2.**

* * *

**Июль вĕçĕнче пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-937-371-31-95.**

* * *

**Пиллĕк пăруланă хĕрлĕ тĕслĕ ĕне сутатпăр.**
**Тел.: 8-965-682-21-20.**

* * *

**Продаем навоз. Цена договорная.**
**Тел.: 8-905-199-61-77.**

* * *

**Продается хозяйство со всеми надворными постройками (дом, летняя кухня, гараж, баня, сарай) в д. Одаркино, земельный участок 0,40 га+0,60 га.**
**Тел.: 8-927-992-31-22.**

***

**В объявлении о согласовании проекта межевания земельного участка Федоровой Раисы Евгеньевны, Крайницкого Сергея Геннадьевича, опубликованного в райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» от 21 марта 2012 года в № 21 (7982), стр. 4, допущена опечатка, после кадастрового квартала 21:17:021001 добавить «площадью 1,24 га».**

**Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике – Чувашии в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: Чувашская Республика – Чувашия, г. Чебоксары, пр. Московский, д. 37.**

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"

КИРПИЧ

ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ

более 500 видов

Тел: (8352) 30-55-10, 50-54-25 www.terminaltk.ru

ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1

ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ

* * *

**Требуется бухгалтер в магазин «Катюша», д. Ярославка, Моргаушский район. Условия: обработка первичных документов, неполный рабочий день, гибкий график работы. Требования: с/спец. образование, знание 1С. Зарплата при собеседовании. Тел.: 446-448. 2-3.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редакторшăн В.Л. ШАПОШНИКОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, явапллă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкрах хисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем явапллă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 17.07.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4493.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.